# «Хисеп вăл лаша мар тытса тухма...»

**"Сăвва ытларах савăнăçлă вăхăтра вулаççĕ. Эпĕ вара ăна ăш-чик вырăнта мар чухне ытларах вулатăп, чунăмри "тĕнче тунсăхне" сирмешкĕн çыратăп. Тепĕр чух пĕрер йĕрке ăнăçлă çыратăн та шăрăх кун çăл шывне сыпкăм-сыпкăм ĕçнĕ пек лăштах пулатăн, лăпланатăн. Тĕрĕсмарлăхпа элек-мелек умĕнче те хăвна вăйлăрах туятăн вара. Çакăнта мар-и поэзин тĕп тĕллевĕ?!" – çапла шутлать Чăваш халăх поэчĕ Николай Исмуков. Чун-чĕрене ыраттарса тасатса сиплемелли эмел вырăнне йышăнать вăл поэзие. Тата мĕнле шухăшсем канăç памаççĕ наукăпа тата поэзипе пĕр харăс туслă пурăнаканскере?**

**КĔСКЕН**

*Николай Аверкиевич Исмуков 1942 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ялĕнче çуралнă. Свердловскри физкультура техникумĕнчен, Урал патшалăх университетĕнчен (1967), Мускаври педагогика институчĕн аспирантурипе (1980) докторантуринчен (1994) вĕренсе тухнă. Патăрьел районĕнчи Ишлĕ шкулĕнче, Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче истори, физика, астрономи, физкультура урокĕсене ертсе пынă. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче ĕçленĕ. 1993 çултанпа Шупашкарти кооперации институтĕнче вăй хурать, хальхи вăхăтра – факультет деканĕ.*

*Н. Исмуков – вун виçĕ кĕнеке авторĕ. Сăввисене чăвашларан хамăр çĕршыври тĕрлĕ халăх чĕлхине тата итальянла, французла, акăлчанла, полякла куçарнă. "Ахăрсамана" сăвăлла трагедийĕ – уйрăмах паллă хайлав.*

*Николай Аверкиевич наукăра та палăрнă çын. Философи категорийĕ, синергетика, наци культури тата ытти ыйтупа пилĕк монографи, 150 ытла статья çырнă. Философи наукисен докторĕ, профессор, Раççей Федерацийĕн професси вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ, Раççейри социаллă наукăсен академийĕн академикĕ.*

*Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ (1996). 1998 çулта литература тата искусство енĕпе Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ пулса тăнă. 2008 çулта "Чăваш халăх поэчĕ" хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Митта Ваçлейĕ тата Марфа Трубина ячĕллĕ премисен лауреачĕ.*

**ПĂРÇА ХИРНЕ ПЫТАННĂ МАН АЧАЛĂХ...**

Йывăр вăхăтра çуралнă, паллах: 1942 çул, вăрçă кĕрлет... Кĕнекесенче те, биографире те çырнăччĕ: аттерен пилĕк эрнере юлнă эпĕ. Атте, Аверкий Андриано-



Амӑшӗ – Мария Ильинична. 1979 ç.



Урал патшалӑх университетӗн студенчӗ. 1964 ç.

вич Исмуков, чунӗпе сиснӗ пуль вӑрçӑран таврӑнаймасса. Анне каласа панине астӑватӑп: сӑпкаран илсе çӗклерӗ тет те вӑрçа тухса каяс умӗн: "Эп сана текех кураймӑп ӗнтӗ, ывӑлӑм, эсӗ мана кураймӑн," – тесе сывпуллашрӗ тет.

Тӗрӗссипе каласан, çӑкӑр-тӑварсӑр, юр-варсӑр ӳснӗ. Тин çеç çуралнӑ ачана сӗт кирлӗ пулнӑ та ӗнтӗ – анне хӑйӗн пурçӑн кӗпине сутса качака туяннӑ. Качаки нумай та пурӑнаймасть тата. Крахмал завочӗ çумӗнчи лачакана лекет те самай шӑнать унта. Кӑмака умне сӑхманпа хупласа та вырттарнӑ ӑна, пурпӗр чӗрӗлеймен шӑнса пӑсӑлнӑскер..

Налук пуçтарса çӳретчӗç тата. Чӑх тытатӑн-и, çук-и – сурӑхӗ пур-и е çук – патшалӑха çӑмарта, çӑм памаллаччӗ. Ача чухне тата мана мӗн тӗлӗнтеретчӗ: кашни йӑраншӑн та – налук. Пирӗн енче мӗншӗн-ха улма йывӑççисем çук тесе те тӗлӗнеттӗм. Кашни тӗпшӗн каллех тӳлемелле пулнӑ иккен. Куçма тете тесе чӗнеттӗмӗр, унӑн пурччӗ темиçе йывӑç. Хамӑрах çисе пӗтереттӗмӗр пуль пахчари панулмисене – пуç пӳрне пысӑкӑш чӑмӑртансанах эпир, шӑпӑрлансем, вӑрттӑн кӗре-кӗре тухаттӑмӑр.

## ЮТ МУЛ ТЕЛЕЙ КӲМЕСТ

Эпӗ – çемьере чи кӗçӗнни. Атте ман иккӗ авланнӑ пулнӑ. Малтанхи арӑмӗ чирлесе çӗре кӗнӗ, унран виçӗ ача юлнӑ. Пӗри вун иккӗре чух ӑш чирӗпе чирлесе вилет. Тепӗр ывӑлӗ, Илюк ятлӑччӗ, вун саккӑрта чух çухалчӗ. Аппа сакӑр вун икӗ çулччен пурӑнчӗ.

Анне, Мария Ильинична, Çӑл Атӑк хӗрӗ пулнӑ, аттепе пӗрлешсен икӗ ывӑл çуратнӑ. Иван тете манран тӑватӑ çул аслӑрах. Нумай çул Первомайски больницинче тӗп тухтӑр пулса ӗçлерӗ. Паян кун – пенсире.

Анне сакӑр вун çичӗ çула пурӑнса çитнӗччӗ. 1992 çулта пытартӑмӑр ӑна...

Вӑхӑчӗ çапла пулнӑ пуль ун чух: аннен, пуян çын хӗрӗ пулнӑскерӗн, суйлама



*Сывă пул, шкул. 1959 ç.*

май пулман пуль çемйи кулаксен шутне лексессĕн. Кукаçи Шупашкар тĕрминче вилнĕ. Икĕ хĕрĕ – Ксенипе Марье – ялта чи сумлă та ĕçченскерсем, çапла çука юлнă. Кукаçи шыв арманĕ тытнă. Коллективизаци пуçлансан арманне те туртса илнĕ, каярахпа – кил-çуртне те. Мунчара пурăнма пуçласан мунчине те тытса илнĕ. Ăста кайса кĕмелле? Виçĕ ачаллине пăхса тăман ĕнтĕ вара Марье аттене качча тухнă чух...

Ăста платник-столяр пулнă ман кукаçи. Çĕпĕре çитсе унта пурнакансен çурчĕсене йывăçран касса кăларнă эрешсемпе тĕрлесе-илемлетсе мул пухнă. Каярах унăн арман çуртне илсе кайнă чух пӳрт тăрринче пытарса хунă туприне тупаççĕ çурт пăсакансем...

Шăпа тени мĕнрен килет-ши вăл? Тĕлĕнмелле пулин те, кукаçине çаратакансем пӳкле вилĕмпе вĕçлеççĕ ĕмĕрĕсене. Пĕри мул пайланă чух çапăçса вилет.



*Сăвă çырма хавхалантарнă Калерия Александровна Исаевăна 50 çултан шыраса тупса тутăр çыхтарнă, кĕнеке парнеленĕ самант.*



*В. Давыдов-Анатрипе Н. Исмуков мăшăрĕсемпе*



*ЧР Патшалăх премийĕн лауреачĕсем: П.В. Денисов, Л.П. Кураков, Н.А. Исмуков. 1998 ç.*



*ЧР культура министрĕ Р.М. Лизакова «Чăваш халăх поэчĕ» хисеплĕ чыса тивĕçнĕ ятпа саламлать. 2008 ç.*

Тепри кукаçин шыв арманне хута янă чухне хĕсĕнсе вилет. Виççĕмĕшĕ чиркӳ чанне антарса пăрахнă чух ӳкет. Теприне тата, Шăхач çынни Арсентьева, хăйĕн йыттиех çисе янă теççĕ... Мĕнле асамлă вăй усалшăн тавăрать-ши чунсăр çынсене? Çынна ырă сунмалла. Усал усалпах çаврăнса килет.

## ХАЛĂХ ФИЛОСОФИЙĔ АНЛĂ

Тăватă йĕркеллĕ сăвăсен кĕнеки кăлартăм. Рубайсем тетпĕр вĕсене. Литература енĕпе Патшалăх премине тивĕçрĕм уншăн. Пирĕн аслă поэтăмăрсенчен вĕренмелли нумай. Анчах пĕр япаланах темиçе хут калани çынна ватăлтарать. Кашнин хăйĕн çулĕ пулмалла. Юлашки вăхăтра поэзи философи еннелле туртăнни палăрать. Тĕнче ăсхакăлĕн юхăмне хирĕç каяймăн, анчах кашни халăхăн хăйне евĕр философийĕ. Ăна поэзи çунаттисем çине лартса вăй çитнĕ таран тӳпене çĕклесси – пирĕн тивĕç. Сăвăсенче шухăшĕ те, туйăмĕ те виçеллĕ пулмалла. Картран тухсан поэзи пĕтет. Ăçта вĕсен шайлаштарăвĕ? Писменĕ – поэт чунĕ.

Философилле поэзие

аталанма Чăваш çĕршывĕ ăнăçлă çĕре – Анăçпа Тухăç культурин чиккине – выр-наçнă. Анăç – шухăш, Тухăç – ӳкерчĕк. Анăç – уйрăмлăх, Тухăç – пĕрлешӳлĕх. Вĕсен пахалăхĕсене сиплештерсе каласа пама рубай капашĕ шăпах вырăнлă пек туйăнать мана. Ку меслетпе чăваш сăвăçисем усă курман мар. Рубай – сăвăрса кăларнă çаврăм шухăш, поэзи картне лартнă чăваш сăмахлăхĕ, халăхăмăрăн кăмăл-сипечĕ. Турри панă чухлĕ пултарулăхăмпа хайларăм "Тăватйĕркене". Ырлакансем те пулчĕç, кĕвĕçекенсем те. Ура хурса пыракансене тав сăмахĕ каламалла: чăннипе, вĕсем тата ытларах вăй хурса ĕçлеме хĕтĕртеççĕ. Тăхăм-сен асĕнче ырă тунă ĕçпе юласчĕ. Ламран лама çапла пытăрччĕ. Тен, пурнăç тупсăмĕ те çакăнта...

Чăвашăн ăслăлăх çӳпçинче мĕнле кăна пахалăх упранмасть пулĕ: литерату-рăпа критика тишкерĕвĕсем, чĕлхе ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçсем, историпе эконо-мика тĕпчевĕсем... Анчах ятарлă литературăра паян кунччен те чăваш халăхĕн философине тĕпчесе çырнă наукăлла статьясем курăнмаççĕ. Ăс-хакăл тĕнчи-не мифологи шайĕнче пăхса тухнипех çырлахатпăр. Хăшĕ-пĕри тата филосо-фире наци хăйне евĕрлĕхĕ пулма пултарнине йышăнмасть çеç мар, хирĕçлет те. Ĕлĕкхи грексен, нимĕçсен, французсен, вырăссен философийĕ пур пулсан, пирĕн мĕншĕн пулмалла мар? Пилĕк монографи хатĕрлерĕм, уйрăм кĕнеке-семпе Мускавра та пичетлесе кăлартăм темиçешне. Вĕсенче эпĕ матери, ку-çăм, пространство, вăхăт тата вĕсен татса татăлми çыхăнăвне чăваш хăй евĕр ăнланнине, çав ăнлавсене категори шайне çĕклеме пултарнине уйрăм тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшатăп.

## МИТТАЛĂХ ÇИНЧЕН...

Поэзире ман вĕренекенсем çук пулĕ. Философире вара эпĕ ертсе пынипе тă-ватă çын философи наукисен докторĕ, икĕ çын философи наукисен кандидачĕ пулайнăшăн савăнатăп. Эппин, ахальтен мар профессор ятне илнĕ тесе сăвă çеç çырса пурăнма хатĕр чунăма лăплантаратăп. "Чăваш халăх поэчĕ" хисеплĕ ята тивĕçни те питĕ яваплă. Исмук йăхĕнчен ватти те, вĕтти те пĕлекен Митта Ваç-лейĕ тухнă. Исмукран ик еннелле кайнă эпир Василий Егоровичпа йăх тымарне пăхас пулсан. Сăмах май каласан, йăхра тата икĕ Ваçлей пур. Василий Егорович вĕсенчен вăтамми. Миттасенчен нумайăшĕ пултаруллă пулнă, сăвă-калав çырнă, куçарусемпе ĕçленĕ...

Манăн пултарулăха "Ахăрсамана" сăвăлла трагеди тухнă хыççăн пушшех те Василий Егоровичăн пултарулăхĕпе танлаштарни те пулнă. Митта Ваçлейĕн икĕ томпа тухнă çырнисен пуххин умсăмахĕнче Геннадий Юмарт çапла каланăччĕ: "Митта шайĕнче çыракан çын пирĕн çук. Унăн "Тайăр" поэми пек вăйлă произве-дени тупаймăн. Исмуковăн "Ахăрсамани" те çитеймест ăна..." Хветĕр Агиверпа пĕррехинче калаçрăмăр. "Санăн "Митта" поэма пур, çавăнпа танлаштарасчĕ хуть. Сăвăлла трагедие мĕншĕн вăл поэмăпа юнашар тăратмалла? Тепĕр енчен пăх-сан, икĕ Митта кирлех-ши? Кирлĕччĕ-ши? Пĕр пек пулни мĕн тума кирлĕ?" – терĕ çыравçă.

Митта Ваçлейĕ вăл – Митта Ваçлейĕ, ун пекки текех çук. Вĕрсе тăракан пурнăç варринче тăнăскер хăрушă элек тӳссе курнă, çапах чĕрине чулланма паман. Унра

– сăпайлăх, чăтăмлăх, çынлăх, чунлăх. Пĕр сăмахпа каласан – митталăх. Митта сăввисем ахальтен мар чуна пырса тивеççĕ... Паллах, унăн витĕмĕ пур ман пултарулăхра, ун тунсăхĕ, чунлăхĕ...

Митта Ваçлейне эпĕ пĕтĕмпе те икĕ хут курнă хам пурнăçăмра. Пĕррехинче хамăр килте, Василий Егорович Çĕпĕртен таврăнсан, тепринче – ăна пытарас умĕн.

Пулас тăхăмсенчен хăшĕ те пулин пиртен ирттерекен сăвăç пулайсан тем пек савăнăттăм – юнра пурри хăçан та пулин палăратех пуль-ха тесе шанатăп. Николай ывăлăм – ăнăçлă сиплевçĕ-тухтăр, ăна хамăр çĕршывра çеç мар, Германире те пĕлеççĕ. Хĕрĕм экономист пулса тăчĕ. Мăнуксем те литература енĕпе каймарĕç: Гриша техника енĕпе аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн аспирантурăра вĕренет халь, Егор та техникăна юрататать: Ломоносов ячĕпе хисепленекен университетра мехмат факультетĕнче вĕренет. Вĕсен ачисем, тен, пирĕн ĕçе малалла тăсĕç...

## УТМА ÇУЛТА ÇУЛ УÇĂЛАТЬ КĂНА!..

Ялта ӳснĕ çын çут çанталăк çине урăх куçпа пăхать, сăкăр хакне туять, çын ĕçне хаклама пĕлет, перекетлĕхĕ пур. Çак таранччен те сĕтел çинчи тĕпренчĕксене шăлса илсе çӳп-çап витрине пăрахма ал çĕкленмест, çылăх пек туйăнать... Чăн тĕрĕссипе, вунă класс пĕтериччен те тăраниччен çăкăр çисе курман та-ха. Пурте колхозра ĕçленĕ хамăр. Социализм тунă, негрсене пулăшнă. Буфетра икĕ татăк çăкăр илмелĕх укçа парса яратчĕ анне. Шкула çав çăкăршăнах каяс килетчĕ, йĕркеллех вĕреннĕ пулсан та.

Шкулта стена хаçачĕ кăларакансен шутĕнчеччĕ эпĕ. Аслăрах классенче вĕренекенсем те хутшăнатчĕç ку ĕçе. Ман ӳкерчĕксем лайăх пулатчĕç, МТС директорĕн ачи Эдик та аван ӳкеретчĕ. Çичĕ класс хыççăн ӳнер училищине кайрăмăр унпа иксĕмĕр. Кивĕ йĕмпех килтĕм Шупашкара – пĕр чĕркуççи çинче тем пысăкăш тăваткал саплăкчĕ... Пĕр начальник валли мăк илсе килекен машинăн кузовĕнче выртса килтĕмĕр хулана. Мăкĕ самай нӳрĕ тата – йĕп-йĕпе çитрĕмĕр хулана.

Мана илчĕç училищĕне. Пĕрремĕш хут батон çисе курнăччĕ ун чух. Малтанхи кунсенчех çав тери килшĕн тунсăхлаттăм, йĕреттĕм. Хура кĕркунне улма кăларма ячĕç пирĕн ушкăна. Ун чух кая юлса кăларатчĕç çĕр улмине – сивĕччĕ, урасем шăнатчĕç. Эп чи кĕçĕнни тата. Пурте кĕрнеклĕрех, каччисем салтака кайса килнĕ, вырăсла та лайăх калаçатчĕç...

Çĕрпӳ районĕнчи пĕр ялта чакаланаттăмăр. Çавăнтан тарса килтĕм тăван яла. Документсене те илсе килмен хам... Хамăр шкулах саккăрмĕш класа кайрăм вара.

Ӳкерес иленӳ ĕмĕр тăршшĕпех пычĕ, темиçе çул каялла курав та йĕркеленĕччĕ. Портрет жанрĕнче пит маçтăрах мар эпĕ, пейзаж ӳкерме юрататăп. Кивпулăхри çуртра упранаççĕ ĕçсем. Халь ӳкерес кăмăл питех çук, вăхăчĕ те çитмест.

Шкулта чухнех ман алла философи словарĕ лекнĕччĕ. Ку япала çапла пулса тухнăччĕ. Пиртен икĕ çурт урлă Макаров Василий Тимофеевич пурăнатчĕ, çав тери вăйлă бухгалтерччĕ вăл. Кĕнекесем нумайччĕ унăн, пураласа тунă кĕлетре упратчĕ кивĕреххисене. Эпир, ачапча, картиш енчен пăралук чиксе ярса туртса кăлараттăмăр мĕн çакланнине пулă тытнă пек. Шут ĕçĕ çинчен çырнă кĕнекесем лекетчĕç ытларах. Пĕррехинче "Философи словарĕ" вырăсла кĕнеке тупăнчĕ. Ăна текех ниçта та хăвармастăм – кĕлте турттарнă чухне те словарь вулаттăм.

Тем ҫӳллӗш купалаттӑмӑр кӗлтесене – кунӗпе вӗсене капана ывӑта-ывӑта каҫхине кӑвапаран туртса ырататчӗ... Ритвана пушататтӑмӑр та йӗтемре, урапа тӗпне темиҫе кӗлте хӑварса меллӗн вырнаҫтараттӑм та унта выртсах вуласа пыраттӑм. Ытти ачасенчен ҫӳллӗрехчӗ те эп мӗн каланине юлташсем итлетчӗҫ, чӑрмантармастчӗҫ. Ушкӑнпа ҫӳреттӗмӗр те-ха хиртен йӗтем ҫине, эпӗ варрине тӑрататтӑм хамӑн лашана. Вӑл хӑех ҫул пӗлет, ыттисенчен юлмасть. Темиҫе ҫухрӑм хирелле тухмаллаччӗ, ҫав вӑхӑтпа усӑ кураттӑм – философи словарьне "чӑматтӑм".

Хӑш терминне ӑнланнӑ, хӑшне ӑнланман ӗнтӗ хам, пурпӗр питӗ кӑсӑкланӑччӗ.

Астрономи, физика предмечӗсене юратса вӗренеттӗм. Вуннӑмӗш класра философи факультечӗсем ӑҫта пуррине ыйтса пӗлнӗччӗ: Мускавра, Ленинградра, Свердловскра. Дон ҫинчи Ростовра тепӗр вунӑ ҫултан тин уҫнӑччӗ. Карттӑ ҫине пӑхрӑм та пуйӑс ҫинчен пуйӑс ҫине куҫмасӑр ҫитме май пур хулана суйласа илтӗм – Свердловска Канаш урлӑ икӗ талӑка яхӑн каймаллаччӗ. Кайран нумай ҫӳренӗ ӗнтӗ калла-малла...

Ачаранах спортпа туслӑ пулнӑ та йӗлтӗрпе чупас енӗпе, шывра ишессипе тата ҫӳле сикессипе спорт мастерӗн кандидачӗн нормативне пурнӑҫланӑччӗ. Ачапча чух ишме юратни пулӑшнӑ. Пур мелне те пӗлетӗп теме пулать: брасс, кроль, баттерфляй... Икӗ хутчен путса вилме пултарнӑ хам. Апла пулсан та шыва юратма пӑрахман. Пӗррехинче шыв авӑрне лекнӗччӗ те аран талпӑнса тухнӑччӗ... Ялта ҫырмасем тулличчӗ эпӗ ача чухне, халь вара чӑх утса каҫаять.

Техникумри спортсменсене общежитире вырӑн паратчӗҫ, апатне те лайӑх ҫитеретчӗҫ: яшка мӗн чухлӗ ҫиес килет, ҫавӑн чухлӗ ҫи. Ҫӑкӑр сӗтел ҫинче ҫаплах ларатчӗ. Стипенди те паратчӗҫ.

Философи ҫинчен ӗмӗтӗме манман, каярах пурпӗр малалла вӗрентӗм. Халӑхра стереотип пур: нумай сӑмах юптаракан ҫынна йӗкӗлтерех "вӑт философ!" теме пултараҫҫӗ. Чӑн-чӑн философ вӑл сахал сӑмахлӑ, унӑн хӑйӗн академиллӗ чӗлхи.

## ПӖРРЕМӖШ ВУЛАКАНӐМ – АРӐМ

Пиллӗкмӗш класранах астӑватӑп ӑна. Пиллӗкмӗш класра ӑшӑрах куҫпа куҫланӑ ырӑ кӑмӑллӑ та чипер хӗрачана. Мария Прокопьевна – медицина сестри. Нихӑҫан та ӳкӗнмен эпӗ унпа пурнӑҫ ҫулне пӗрлештернӗшӗн. Маттур, ӑслӑ-тӑнлӑ, илемлӗ, ытлашши калаҫмасть. Ватӑлма та пӗлмест вӑл ман – ҫамрӑк чухнехи пекех чипер. Ҫемье валли ҫуралнӑ хӗрарӑм вӑл. Ачасене те тӗрӗс ӳстертӗмӗр пӗрле, Турра шӗкӗр. Вӗсен утӑмӗсемшӗн намӑсланни, тарӑхни пулман пирӗн. Пӗрпӗрне шанни, ӗненни пурри паха.

Мана пурнӑҫра ӑннӑ темелле. Пӗрремӗш вулаканӑм-итлекенӗм – арӑм. Чӗлхе туйӑмӗ пур унӑн, чун-чӗрипе ӑнланать поэзине. Эпӗ сӑвӑ вуланине юратать. "Сан сӑввусене сан пек лайӑх вулакан ҫук," – тет радиопа е телевиденипе илтсен.

Мария Прокопьевна поэт-писательсене питӗ хисеплет. Давыдов-Анатрипе туслӑччӗ эпир. Ҫемьесемпе Кӑкшӑмра пӗрле канаттӑмӑр...

Кану ҫуртӗнче питӗ кӑмӑллӑ ҫырӑнатчӗ. Ирхи апат хыҫҫӑнах вӑрмана тухса каяттӑм хутпа кӑранташ кӗсьене чиксе. "Ахӑрсамана" шӑпах Кӑкшӑмра ҫырӑнчӗ ман – тунката ҫинче ларсах...

## "ЭП ПĔЧĔК АСЛĂК ТĂРРИНЧЕН МĔНПУР ÇУТ ТĔНЧЕНЕ КУРАТĂП..."

Ку йĕркесене эп шкулта вĕреннĕ çулсенче çырса пынă тетрадьре асăрхарăм. Юрать, ниçта та пичетлемеççĕ тесе алла усман çамрăк чух. Район хаçатне ярса параттăм – малтан темиçешне лартса ячĕç те тек кăлармарĕç. Нумай çул иртсен тин пĕлтĕм сăлтавне – ун чухнехи хаçат редакторĕ шкул ачи лайăх шайра сăвă çырма пултараймасть, Исмук Миккулĕ таçтан йăкăртать пулмалла тесе каланă тет. Чăваш поэчĕсене вулама вăхăчĕ пулман ĕнтĕ парти çыннин...

Чăваш литературинче хăйне евĕр ахăрсамана пырать халь – сăвă-калав çырса çеç пурăнаймастăн. Çемьене тăрантарма пултаракан професси те кирлĕ. Философи маншăн шăпах çакăн пек професси. Философи – абстракцилле категори шайĕнчи ăс-хакăл. Ăна пĕтĕм чунпа юратаймастăн. Поэзи валли вара чи малтан чун кирлĕ. Çав тери ăслă çырсан çынсем ăнланмаççĕ. Чун çинчен манса кайса çырсан – вуламаççĕ, йышăнмаççĕ.

Поэта халăх пĕлмесен япăх. Халăхăн паллашмалла сăвăçсен ĕçĕпе. Çав вăхăтрах сан поэзине ăста поэтсем йышăнмарĕç тĕк те йывăр. Халăх та юраттăр, ăста поэтсем те хисеплесе хаклаччăр. Тепĕр тесен, вăхăт хăех вырăна лартать – тивĕçсĕр манăçнă поэтсем те пур пирĕн, çав вăхăтрах ĕнер çеç кăшкăрашса çӳренĕ поэтсем çухалса пыраççĕ. Те çыраймаççĕ, те хевти пĕтнĕ, те шалта мĕн пуррине çырса пĕтернĕ те тек ним те çук.

Ман хевте пĕтмен. Ку вăл тем пысăкăш телей. Темиçе йĕрке ăнăçлă çырăнать те темиçе кун хăпартланса çӳретĕн.

Аннем нихçан та хистесе "çав профессие суйла" тени пулман, вăл хăйĕн ачисене ăнланма тăрăшнă, вĕсене ĕненнĕ. Эпĕ Свердловска тухса каяс умĕн шăпах сысна çăвăрланăччĕ, икĕ çурине сутрĕ çул укçи тупма. Вăл пире яланах хавхалантарма тăрăшнă. Каярах вара хаçат-журналта ман сăвăсем тухсан вĕсене çатăрка хутпа чĕркесе стена çине вырнаçтаратчĕ...

Чăваш поэзине питĕ пысăк вырăна хурса хаклатăп. Мĕншĕн тесен французсен, акăлчансен поэзине аван пĕлетĕп. Китайăн питĕ хăйне евĕрлĕ поэзи. Чăваш поэзийĕ тĕнче поэзийĕнчен кая мар. Чи малтан шухăшне пăхатăн, паллах. Кĕтмен танлаштарусем пур пирĕн... Константин Иванов ирĕклĕ, чăн чăвашла, чĕлхене хĕсĕрлемесĕр çырнă. Çеçпĕлĕн хĕрӳлĕхĕ тыткăна илет. Унăн витĕмĕ пур поэтра та пур пуль тесе шутлатăп. Мана Миттан тата Айхин малтанхи пултарулăхĕ витĕм кӳнĕ – тăварлă шыв пек сăрхăнса кĕнĕ ман чуна вĕсен поэзийĕ.

Айташ, Теветкел, Сементер, Лукин, Кервен... Пĕр ăстрăм нумай хушамат çунатланнăччĕ – халь питех курăнмаççĕ çĕнĕ ятсем. Паян кăшт йăвашланса пыратпăр пек туйăнать. Çапах хăйне евĕрлĕ шухăшĕсемпе, чĕлхипе ыттисенчен уйрăм тăракан çыравçăсем пурри савăнтарать. Нумайăшĕн пултарулăхне хăйсене çывăх пĕлнĕ пирки объективлă хаклама ансат мар. Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле тенĕ пек, кашни çыннăн хăйĕн çитменлĕхĕ, çылăхсăр çын çук тĕнчере. Улăхра мĕн чухлĕ чечек! Чĕпĕтекен пиçенпе ытти çум курăк та пур. Пĕр-пĕринпе пĕр пек марри пуянлатать те ĕнтĕ поэзие.

**Пичете Надежда ОСИПОВА хатĕрленĕ**